25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
9
ЮНКУН
285 (6220) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрлăх фондне чи паха тырă хывса хăварар

Фронтпа тăван çĕршыв ыйтнине тивĕçтерме колхозлă ялхуçалăхĕн 1943 çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илмелле. Çак задачăна пурнăçланă çĕрте вăрлăх пĕтĕм ĕçĕн ăнăçлăхне татса параканни пулса тăрать. Мĕнле вăрлăх акатăн, çавăн пек тырпул туса илетĕн. Таса та шултăра вăрлăхсем акатăн—паха тырпул туса илетĕн, çĕршывпа Хĕрлĕ Çара нумайрах тырă парса тăшмана хăвăртрах çĕнтерме пулăшатăн. Республикăри малта пыракан колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене çавăн пек туса пыраççĕ те. Нумай колхозсем тырпулсене пухса кĕртнĕ хыççăнах чи шултăра та таса тырра вăрлăхлăх уйăрса хунă. Вĕсене пĕрре çеç мар, икшер хут тасатса сортланă, амбарсемпе кĕлетсене тĕплĕн пуçтарса хунă. Хуçалăха лайăх йĕркелесе пыракан колхозсем вăрлăхлăх тырă уйăрас ĕçе яланах тимлĕн тăваççĕ. Вăрлăхлăх тырăсене типĕ, ăшă çанталăкри амбарсемпе кĕлетсене кĕртме тăрăшаççĕ, вĕсен нӳрĕлĕхĕпе шăтас пахалăхне упраççĕ, вĕсен тасалăхĕшĕн кĕрешеççĕ.

Шăхасан районĕнчи 44 колхоз декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур йышши тырăсем енĕпе те 1943 çулта акма вăрлăхсем çителĕклĕ таран уйăрса хунă. Районри пур колхозсем те килес çул лартма çĕрулми вăрлăхне кирлĕ хисепрен ытларах уйăрса хунă. 1.310 центнер вăрлăхлăх тырра триерсемпе сортланă.

Вăрлăх фончĕсене уйăрса хурас ĕç Калинински, Сĕнтĕр, Канаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсенче те начар мар пулса пырать. Ку районсем 1943 çулта акма кирлĕ тĕштырăсен вăрлăхĕн 72—75 процентне уйăрса хунă. Анчах, калас пулать, республикăра вăрлăх фондне тăвас ĕç вăраха кайса пырать. Нумай районсен çак ĕçе ноябрь уйăхĕнче вĕçлемеллеччĕ. Анчах вăл пурнăça кĕмерĕ. Çавăнпа пирĕн республика 1943 çулти çуракине валли вăрлăхсем хатĕрлес плана тĕштырăсем енĕпе 46 процент, пăрçа-ясмăк йышши культурăсене те шута илсен, 49,1 процент çеç пурнăçланă, уйăрнă вăрлăхсен 3,8 процентне çеç триерсем витĕр кăларса сортланă.

Иртнĕ çирĕм кун хушшинче те вăрлăх фондне уйăрса хурас ĕçре республикăри районсем татăклă улшăну тумарĕç. ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарияччĕ те колхозсенче çак ответлă ĕçе хăвăртрах пурнăçлассишĕн кирлĕ пек кĕрешмест-ха.

Ишлей районĕнчи колхозсем вăрлăх фондне декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 11.498 центнер тырă хунă, пăрçа йышши культурăсене те шута илсен, 14.353 центнер хунă, çак шутран 679 центнер вăрлăха триерсемпе сортланă. Районри колхозсем вăрлăх фондне хăйсем йышăннă срокра уйăрса хураймарĕç. Плана тултарма районăн вăрлăх фондне татах 1.681 центнер тырă хумалла.

Первомайски районри нумай колхозсем иртнĕ çуракине пысăк кăлтăксемпе ирттерчĕç. Вĕсем вăрлăхсене вăхăтра хатĕрлесе хуман пирки пулчĕç. Çакна шута илсе Первомайски районри колхозсен кăçал вăрлăхсене вăхăтра хатĕрлесе хурассишĕн уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле. Анчах çакна халĕ те курма çук-ха. Районри колхозсен вăрлăх фондне пурĕ 15.571 центнер тырă хумалла. Ку шута пăрçа йышши тырăсем те кĕреççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăрлăх фондне пурĕ те 7.997 центнер çеç хунă, вăл шутран 245 центнер тырра çеç триерсемпе сортланă.

Кувакино районĕнчи колхозсенче вăрлăхлăх çĕрулми уйăрасси юлса пырать. План тăрăх вăрлăхлăх 10.800 центнер çĕрулми уйăрса хумалла, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 2.512 центнер çеç уйăрса хунă, вĕсен пахалăхĕ те пысăк мар. Вăрлăх фончĕсене уйăрса хăварас ĕç çине çакăн пек пăхнине халех пĕтермелле. Вăрлăха халĕ кирлĕ таран уйăрса хумалла, нӳрĕ пулсан, типĕтмелле, шăтас пахалăхне тĕрĕслеттермелле.

Çуракине хатĕрленме тытăнмашкăн вăхăт çитнĕ. Малта пыракан колхозсен примерĕпе пур колхозсенче те вăрлăх тасатакан звеносемпе бригадăсем тăвас пулать, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлмалла. Вăрлăх сортлас ĕçе васкатмалла, 1943 çулти çуракинче таса мар вăрлăх пĕр килограмм та акăнмалла мар. Пăрçа йышши тырăсене алăпа сортлас ĕçе анлăн йĕркелес пулать, кашни килограмм тырра лайăх сортласа хумалла.

Сортлă участоксенчен пухнă пĕтĕм тырпул вăрлăх фондне кĕмелле, вăл пĕр килограмм та урăх çĕре сапаланмалла мар. Вăрлăхлăх тырă çитмен колхозсен ăна ытти колхозсенчен улăштарса илмелле. Кашни колхозăн пур йышши вăрлăха та кирлинчен ытларах хатĕрлеме тăрăшас пулать. Вăрлăх фончĕсене çак кунсенчех хывса çитермелле.

Колхозăн вăрлăх фондне тимлĕн сыхлас пулать. Амбарсемпе кĕлетсем патĕнче кунĕн-çĕрĕн хурал, пуштартан сыхланмалли хатĕрсем пулмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи енселлех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чăссем, вак группăсене уйăрăлса кĕрешсе, противникăн укрепленийĕсене çавăра-çавăра илсе пĕтерсе пынă. Противникăн 6 дзочĕпе 3 блиндажне вĕсен гарнизонĕсемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери 7 пулеметнăй точкăна, минометсен 2 батарейине тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Дон шывĕн сулахай хĕрринче, пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă. Тăшман хăйĕн иртнĕ кун çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма хăтланни усăсăр пулнă, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕр участокра совет чăсĕсем 500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 10 танкне çунтарса янă, 14 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене тĕреклетнĕ тата разведка тунă. Старши лейтенантăн Ремизовăн подразделенийĕ 140 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, пĕр танк, 5 автомашина пĕтерсе тăкнă тата 2 дзота ишĕлтернĕ. Тепĕр участокра Н-ски чăçăн боецĕсем нимĕçсен контратакине сирсе ярса 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, 2 противотанковăй оруди, 18 пулемет, 7 миномет, 40 автомат, винтовкăсем тата патронсем тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем, противникăн контратакисене сире-сире ярса, малалла куçса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра совет чăсĕсем нимĕçсене икĕ опорнăй пунктран хăваласа кăларнă. Противникăн пĕр батальон пехотипе 15 танкĕ контратакă тунă, анчах та вăл контратакăна пирĕннисем сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн виллисем нумай выртса юлнă тата персе çĕмĕрнĕ 2 танк ларса юлнă. Нимĕçсен тепĕр участокра тунă контратаки те пăчланса ларнă, вĕсем унта тĕреклетнĕ пункта каялла тытса илесшĕн пулнă. Хаяр çапăçу кунĕпех пынă. Противникăн 200 салтакĕпе офицерне яхăн вĕлерсен тата 7 танкне персе çĕмĕрсен, вăл вара каçпала каялла чакнă. Пирĕн боецсем пĕр танк, 7 оруди, 18 пулемет тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

Великие Луки районĕнче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳссе пирĕн подразделенисене кăшт хĕсме тата халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илме пултарнă. Совет боецĕсем контратака тунă та противника халăх пурăнакан çав пунктран хĕссе кăларнă, унтан ăна хăваласа пырса халăх пурăнакан тата 2 пункта тытса илнĕ. Çав участокра 3 кун пынă çапăçусенче нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне çити вилнĕ е аманнă.

* * *

Крымри партизансен отрячĕ ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче тăшманăн поездне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, çар техники тиенĕ 19 платформа, пульмановски вагон тата противникăн войскисем ларса пыракан 8 теплушка çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Итальянецсен «Кунеэзе» ятлă 4-мĕш альпийски дивизийĕнчи 1-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Антонио Астеджияно çапла каласа панă: «Пире Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта тухса кайма хушакан приказ килни çинчен каласа парсан, стройран çакăн пек кăшкăрчĕç: «Пирĕн Российăра нимĕнле ĕç те çук!», «Нимĕçсем хăйсем вăрçчăр!» тесе кăшкăрчĕç. Тухса каяс умĕн салтаксем казармăсенче кроватьсемпе сĕтелсене çĕмĕрсе пĕтерчĕç, чӳречесене ватрĕç, Муссолини сăнĕсене çура-çура пăрахрĕç. Фронтра салтаксем тарăхни лăпланмарĕ çеç мар, вăл унта тата ытларах ӳссе çивĕчленсе кайрĕ. Юлашки вăхăтра нимĕçсемпе итальянецсен войскисем Ливире поражени тӳсни çинчен тата Италин хулисем çине бомбăсем пăрахни çинчен калакан хыпарсем салтаксене уйрăмах хытă пăшăрхантараççĕ. Салтаксенчен нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: ку вăрçă нимĕçсен вăйĕпе пуçланчĕ, кунта пирĕн юн вĕсемшĕн тăкăнать. Анчах нимĕçсем пирĕн тăван çĕршыва инкек кӳчĕç, намăслантарчĕç. Çапла ĕнтĕ, нимĕçсем пире сутрĕç, вилмелле туса хучĕç, теççĕ».

* * *

Калинин облаçĕнчи Великие Луки районĕнчи Соколово ялĕнче, халь нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскерте, пурăнакан колхозницăсем Клавдия Асрашевăпа Мария Капустина çапла каласа панă: «Гитлерла чунилемсем пирĕн ялта нумай çынна вĕлерчĕç тата асаплантарчĕç, çуртсемпе хуралтăсене пурне те тенĕ пекех çунтарса ячĕç. Степан Валдаев колхозника нимĕç вăрăхурахĕсем хăйĕн пӳртĕнчех автоматпа вĕлерчĕç. Палачсем Клавдия Солдатенковăна тата унăн виçĕ ачине, Евдокия Соколовăна, Анастасия Калининăна тата унăн икĕ çамрăк ачине вĕлерчĕç. Вĕсем пире мĕн чухлĕ хĕн-хур кăтартнине сăмахпа каласа пама та çук. Нимĕçсем вĕсем культурăллă çынсем, тесе калатчĕç ĕлĕк. Халĕ ĕнтĕ эпир пĕлетпĕр: вĕсем—этемсем мар, вĕсем фашистла тискер кайăксем, ваттине те çамрăккине вĕлерекенсем пулса тăраççĕ»

Декабрĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи енселлех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чăссем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата противник çине персе тăнă. Пирĕн артиллери тата совет пехотин вак групписем нимĕçсен 40 дзотне ишĕлтернĕ, 13 огневой точкине пусарса лартнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн контратакисене сире-сире ярса ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Пĕр участокра кăна гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн позицисем патнелле 200 гитлеровец тата 6 танк тапăнса пынă. Пирĕн боецсем противникăн танкĕсене ултăшне те персе çĕмĕрнĕ тата тапăнса пынă нимĕçсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Противник нихăш участокра та хăйĕн маларах çухатнă рубежĕсене каялла тытса илеймен тата хăйĕн позицийĕсене кăшт та лайăхлатайман. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен транспортнăй самолетне персе ӳкернĕ, çав самолет вара оборонăн малти хĕрринчен инçех мар вырăна анса ларнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене тĕреклетнĕ тата противник çине персе тăнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ пирĕн подразделение, халăх пурăнакан пункта хӳтĕлекенскере, атакăланă. Пулеметсемпе тата минометсемпе персе, гитлеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ, 7 пулемет тата 16 автомашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра совет войскисем противникăн контратакисене сирсе тăнă тата наступленилле çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединени тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, çав çапăçусенче нимĕçсен 600 салтакпа офицер таран вилнĕ е аманнă. Пирĕн артиллери 6 танка персе çĕмĕрнĕ, 6 орудие, 20 пулемета тата 4 миномета пĕтерсе тăкнă.

Ржев-Вязьма чугунçулĕ районĕнче Мухинпа Самойленко юлташсем ертсе пыракан боецсем активлăн çапăçса нимĕçсен икĕ ротăна çити пехотине тата 8 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чăçăн боецĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 5 танкне, 4 бронемашинине, 22 станковăй пулеметне тата 3 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Çав çапăçура противникăн 600 салтакпа офицер таран вилнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче снайперсем икĕ кун хушшинче 360 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чăçăн боецĕсем 200 нимĕçе çити вĕлернĕ, тăшманăн 12 дзотне, 20 блиндажне тата 3 наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 62 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата Германие яма хатĕрлесе хунă тыррăн 2 складне тытса илнĕ. Нимĕçсенчен тытса илнĕ тырра партизансем пĕтĕмпех вырăнти халăха салатса панă.

* * *

Сталинград районĕнче Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи фельдфебель Гергард Т. куçнă. Вăл çапла каласа панă: «Эпĕ вăрçă пуçланнăранпах Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тăтăм. Мана тимĕр хĕреспе наградăларĕç. Юлашки вăхăтра дивизи оборонăллă йывăр çапăçусем туса пырса питех те пысăк çухатусем тӳсрĕ. Вырăссен атакисем пире халран ячĕç. Пурин те нервĕсем вĕçне çитиех çивĕчленсе кайнă. 12 кун хушши пĕр тăтăш çапăçнă хыççăн (вăл çапăçусем час-часах штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленнĕ) салтаксем нумайĕшĕ йăлтах халран кайрĕç. Эпĕ урăх чăтса тăраймарăм. Декабрĕн 5-мĕшĕнче эпĕ ытти икĕ салтакпа пĕрле вырăссем енне куçрăм».

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет боецĕсемпе командирĕсене тискеррĕн асаплантарни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Сталинград облаçĕнчи Ягодный ятлă халăх пурăнакан пунктран кăнтăр-хĕвеланăçнелле 5—6 километрта тăракан пĕр высота районĕнче эпир красноармеецсемпе командирсен 27 виллине тупрăмăр. Çакна пĕлнĕ: вĕсем çапăçусенче аманнă пулнă та нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ, фашистла палачсем вара çав аманнă боецсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Коцуба красноармеецăн ӳтне штыксемпе чиксе пĕтернĕ, пуç шăммине çапса ватнă. Старши лейтенантăн Ф. Е. Саенкон питне паллайми тăвиччĕнех штыксемпе чиксе пĕтернĕ. Ăна вара тумтирĕ тăрăх кăна пĕлнĕ. Ытти вилĕсене çав тери кассавакласа пĕтернĕ, вĕсене паллама та май пулман». Акта çаксем алă пуснă: старши лейтенант Гречишников, лейтенант Богданов, старши лейтенант Чакин, лейтенант Терешин, майор Новиков.

* * *

Краков районĕнче (Польшăра) Польша патриочĕсем хире-хирĕç пыракан икĕ поезда пĕр çулпа янă. Çар эшелонĕ товарнăй поездпа пĕрĕннине пула нимĕçсен 200 салтакĕ ытла вилнĕ е аманнă.

СССР Совнаркомĕнче

Рабочисемпе служащисене харпăрхăйĕн пахчисем валли уйăрса пана çĕр участокĕсене предприятисемпе учрежденисем çумнех çирĕплетсе хăварасси çинчен

Рабочисемпе служащисем харпăрхăй тĕллĕн пахча-çимĕç лартса тăвассине малалла аталантарас тата уйрăм çынсемпе коллективсене уйăрса панă пахчасенчи çĕр участокĕсене ĕçлессине лайăхлатас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăннă:**

1. 1942 çулта хуласемпе рабочи поселоксен çĕрĕсенчен тата государствăн çĕр фондĕнчен рабочисемпе служащисене коллективлă тата уйрăмшар пахчасем тума уйăрса панă çĕр участокĕсене, çав çĕрсемпе коллективлă тата уйрăмшар пахчасем тунă çĕрте çулсеренех усă кураççĕ пулсан, вĕсене предприятисемпе учрежденисем çумне 5—7 çуллăха çирĕплетсе хăварас.

Рабочисемпе служащисене харпăрхăйĕн пахчисем валли уйăрса панă çĕр участокĕсене кăтартса панă срок хушшинче рабочисемпе служащисем хушшинче тепĕр хут валесси уйăрма предприятисемпе учрежденисен администрацийĕсене чарас.

2. Çакăн пек йĕрке тăвас: пĕр-пĕр предприятири е учрежденири ĕçрен хăтараççĕ пулсан (инвалида тухнине пула, Хĕрлĕ Çара кайнине пула е урăх ĕçе куçнине пула ĕçрен хăтарнисĕр пуçне), уйăрса панă пахча участокĕсемпе усă курмалли право, çавăн пекех тата лартнă пахча-çимĕçе пухса илмелли право çухалать; кăтартнă участоксенче ĕçленĕшĕн тӳлесе татаççĕ,

ЙĔЛТĔРÇĔСЕН ÇĔНĔ ОТРЯЧĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕР

89 команда организациленĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене тата шкул ачисене йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме районра пурĕ 89 команда организациленĕ. Командăсенчи çынсем чылайĕшĕ медицина комиссийĕ витĕр тухнă. Юлашки ик-виçĕ эрне хушшинче йĕлтĕр спорчĕн 20 инструкторне хатĕрленĕ, йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсем пулма халĕ татах 42 çамрăка хатĕрлетпĕр. Ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне районĕпе 1.042 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Кăçал комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен тата шкул ачисен вăйĕпе 273 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе Ĕмпĕрт Туçари «Память Ленина» колхоз çамрăкĕсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. Унта 12 комсомолец, кашниннех йĕлтĕрсем пур. Вĕсенчен 8-шĕ йĕлтĕрсене хăйсем тунă. Октябрьскинчи вăтам шкулта вĕренекенсем те йĕлтĕрсене хăйсемех тăваççĕ.

Йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли командăсенче халĕ тренировочнăй занятисем ирттереççĕ. «Правда» колхоз çамрăкĕсем, сăмахран, çак кунсенче 3 километра йĕлтĕрпе кайрĕç.

Халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçре шкулсенчи военруксем тата физкультурăпа вĕрентекенсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах, тӳрех калас пулать, вĕсем халĕ ку ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха.

Т. ЧУРМАКОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

„Инструктор шыратпăр-ха...“

Вăрçăн иккĕмĕш хĕлне кĕтĕмĕр. Халĕ партипе комсомол тата совет организацийĕсем умне халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ыйту çивĕччĕн тухса тăчĕ. Анчах ВЛКСМ Ишлей райкомĕ (секретарĕ Серебрякова) ку таринччĕнех халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ыйтăвăн тулашĕнче тăрать-ха.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ кăçалхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентесси çинчен ятарласа постановлени йышăннă. Вăл постановленире ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсене тата вĕсен секретарĕсене ноябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентмелли командăсене организацилесе çитерме, йĕлтĕр базисене йĕркене кĕртме, йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсене хатĕрлеме тытăнма хушнă. Серебрякова юлташ çак постановление илнĕ те тирпейлĕ çĕре чиксе хунă. Кайран вара ун çинчен йăлтах манса кайнă. Çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçе организацилес тĕлĕшпе ВЛКСМ Обкомĕ те постановлени йышăннипех лăпланса ларнă. Ку ыйтупа райкомсемпе горкомсене «ытлашши чăрмантарман».

ВЛКСМ Обкомĕ çак постановление йышăннăранпа икĕ уйăх ытла иртрĕ. Йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе Ишлейре мĕнле ĕçсем тунă тетĕр эсир? Постановление ВЛКСМ райкомĕн бюровĕнче ку таринччен те сӳтсе явман.

—Чăрмавĕ мĕнре? тесе ыйтсан, Серебрякова юлташ нимĕн именсе тăмасăрах.

— Физкультурăпа спорт ĕçĕн райинструкторне тупаймарăмăр-ха, — тесе ответлерĕ.

— Постановление инструкторсăр сӳтсе-явма май пулмарĕ-и вара?

— Пулмарĕ çав. Урăх никама та хушма çук-çке: ВЛКСМ райкомĕн çар ĕç енĕпе ĕçлеме суйланă секретарĕ Сергеев—ВКП(б) райкомĕн çар ĕç отделĕн заведующийĕ, çарпа физкультура ĕçĕн яланлăх комиссин председателĕ Милютин—Осоавиахим райсовечĕн председателĕ пулса ĕçлеççĕ. Вĕсемниепле те ерçеймеççĕ...

— Апла пулсан Сергеев юлташ халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе мĕн тăвать-ха?

— Иксĕмĕр те райинструктор шыратпăр, терĕм-çке-ха...

Çапла вара «инструктор çукран» Ишлейре çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕç сӳнсе ларнă. Ноябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне комсомолăн районри 82 пуçламĕш организацийĕнчен 3-шĕнче çеç—Ишлейри вăтам шкулта, Хыркассинче тата Шурчара тренировкăсем ирттерме тытăннă. ВЛКСМ райкомĕ йĕлтĕрсене шута илсе те тухман. Ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне, Серебрякова юлташ калашле, туллимар даннăйсем тăрăх, районра пĕтĕмпе те 373 мăшăр йĕлтĕр çеç. Йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсене хатĕрлеме тытăнман. Мĕншĕн тесен «ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа Спорт ĕçĕн Комитечĕ Ишлейре миçе инструктор хатĕрлемеллине кăтартса разверстка паман», имĕш.

ВЛКСМ Ишлей райкомĕпе унăн секретарĕ Серебрякова юлташ çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕç çине çакнашкал ответсăрла пăхассине хăçан пĕтерĕç-ши?

„Сăлтавлă“ çынсем

КӲКЕÇ. Толиковăри тата Кӳкеçри çамрăксем йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли командăсем тунă. Унти кашни çамрăкăн йĕлтĕр пур. Вĕсене Кӳкеçре—вăтам шкулăн военрукĕ Иванов юлташ, Толиковăра—Николаев юлташ вĕрентеççĕ. Вĕсем халĕ темиçешер заняти ирттернĕ те ĕнтĕ.

Халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçре шкулсен малти вырăнта пулмалла. Ялти колхозниксем унта йĕлтĕрсем пуррине, йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентекен инструктор пуррине пĕлсе тăраççĕ. Анчах районри нумай шкулсенче йĕлтĕрсем çук. Сарапайкассинчи туллимар вăтам шкулта 120 мăшăр йĕлтĕр кирлĕ, паянхи куна унта 17 мăшăр çеç пур.

Йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем йĕлтĕрпе çӳреме шкул ачисене çеç вĕрентме пăхаççĕ, колхозниксене вĕрентессине хăйсен тивĕçĕ тесе шутламаççĕ. Çавăнпа вĕсем колхозниксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли командăсене явăçтарман, йĕлтĕрсем хатĕрлес ĕçе ертсе пымаççĕ, «йĕлтĕрсем çук», тесе халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентессине чăрмантарса пыраççĕ.

А. СМИРНОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Перекетлĕхшĕн пĕтĕм коллектив кĕрешет

Типтерлĕхпе перекетлĕх—пирĕн хуçалăхри çирĕп закон. Чĕр тавара, материалсене тата электроэнергине типтерлĕ тыткалани вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Перекетлĕхшĕн кĕрешесси—предприятисен пĕтĕм коллективĕн тивĕçĕ. Çакна Вăрнарти фосфорит заводĕнчи кашни рабочипе служащи, инженерпа техник ăнланса илнĕ. Кунта ĕçлекенсенчен кашниех хуçалăхри перекетлĕхшĕн кĕрешет.

Завод вăрçă вăхăчĕшĕн питех те хаклă чĕртаварпа ĕçлет. Çак чĕртавара нормăран кăшт нумайрах расходлани те таварăн хăйне ларакан хакне хăпартма, продукци туса кăларассине чарма пултарать. Завод коллективĕ чĕртавара нормăпа палăртнă чухлĕ çеç мар, унтан та сахалтарах расходлассишĕн тăрăшать. Тăрăшни хăйĕн результачĕсене парать: коллектив хаклă чĕртавара 1 процента яхăн перекетлесе пыма пуçланă. Çавна май завод çĕршыва 580 пин тенкĕ перекет кӳнĕ.

Анчах коллектив çакăнпа лăпланса лармасть, вăл вак-тĕвек япаласене те перекетлессишĕн кĕрешет. Сăмахран, 1,5 километр тăршшĕ телефон проводне ахаль пралуксене пĕтĕрсе тунипе улăштарнă. Электричество вăйне сахалтарах расходлас тата оборудовани юрăхсăра тухнине чакарас тĕллевпе заводри виçĕ «Максиконран» иккĕшне çеç ĕçлеттереççĕ. Çапла туни завода ку таринччен 16 пин тенкĕ перекет панă. Грохотăн тĕп алийĕ айне, ăна час пĕтесрен сыхлас тесе, триер алине лартнă. Çакна май, тĕп ала ĕçлеме пултарнă вăхăт 15 хут ӳсет тата халиччен 1.366 тенкĕ перекет кӳнĕ. Çавăн пекех элеваторăн кивĕ сăнчăрĕсене юсани, хăшпĕр тимĕр пайсене йывăçпа улăштарни, телефон траверсĕсене (16 штука) йывăçран туни, çĕнĕрен лартнă склада витнĕ çĕрте хĕçтимĕр банкăсемпе усă курни—сортлă тимĕре упраса хăварма тата 1.500 тенкĕ перекетлеме май панă.

Завод коллективĕ тĕслĕ металсене пухас тĕлĕшпе те тăтăшах ĕçлет. Заводра панă окалинăран 290 килограмм йăс, 12 килограмм баббит пухса илнĕ.

Перекетлĕхшĕн кĕрешнин пур тĕслĕхĕсене те илсе кăтартма çук. Пирĕн кашни работник кун каçа мĕн те пулин перекетлет. Пĕтĕм коллектив çавăн пек ĕçлленине пула çĕршыва 600 пин тенкĕлĕх перекет кӳнĕ.

Анчах перекетлĕхшĕн кĕрешесси кунпа вĕçленнĕ теме çук. Мĕншĕн тесен пирĕн ку енĕпе тумалли ĕçсем татах та нумай-ха. Уйрăмах малашне топливăна, сĕрмелли çусене тата электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле пулать. Топливо енĕпе 4-мĕш кварталта 100 кубометр вутă çеç перекетленĕ, сĕрмелли çусемпе электроэнергине перекетлесси нормăна çеç вырнаçать.

Г. ЗЕЛЬЦЕР.

Ачасене вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене хăварт пĕтермелле

Шкул директорĕсемпе заведующийĕсен канашлăвĕнчен

ШĂХАСАН. Çак кунсенче шкул директорĕсемпе заведующийĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Вăл икĕ ыйту: шкулсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентесси тата 1942—1943-мĕш вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнчи итогсем çинчен сÿтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа райвоенком Тямушкин юлташ докладне итленĕ. Докладчик, çавăн пекех пренире тухса каласакансем те, районри шкулсенче çарпа физкультура ĕçĕ çитĕлĕксĕр пулса пынине палăртрĕç. Чылай шкулсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентме учебниксем çук, çар кабинечĕсем, туман, çарпа физкультура ĕçне вĕрентнĕ çĕрте кирлĕ нагляднăй пособисемпе спорт инвентарĕсем илсе хатĕрлемен. Районри шкулсенче пурĕ 3 пин мăшăр ытла йĕлтĕр пулмалла пулсан, паянхи куна пурĕ те 315 мăшăр çеç пур.

Иккĕмĕш ыйтупа Ямашри шкул директорĕ Менч, Çĕнĕ Мамаши туллимар вăтам шкул директорĕ Налимов тата Львов юлташсем отчетсем туса пачĕç. Пренире пурĕ 6 çын тухса каларĕç. Вĕсем шкулсенче ачасем вĕренме çÿрессине тата вĕренÿре ĕлкĕрсе пырассине тивĕçлĕ пусăмра марине палăртрĕç. Ямашри вăтам шкулта вĕренме çÿресси 85 процент, вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси 73 процент çеç шутланать. Çавăн пекех Мамшри, Шĕкĕрти туллимар вăтам, Тури Сурăмри, Троицкăри пуçламĕш шкулсенче те хăшпĕр ачасем шкула кун сиктерсе çÿреççĕ, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Кушкулсенче пионерсемпе ĕçлессине манăçа хăварнă. ВЛКСМ райкомĕ пионерсен ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе начар ĕçлет.

Райçутĕç пайĕн заведующийĕ В. Христофоров юлташ шкул директорĕсем çамрăк учительсене ĕçре кирлĕ пек пулăшса пыманнине, шкулсем ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе кирлĕ пек ĕçлеменнине тата шкулсем валли вутă хатĕрлесси çитĕлĕксĕр пулса пынине кăтартса пачĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Вĕренÿ ĕçне—çÿлĕ пусăма

ЙĔПРЕÇ. Отечественнăй аслă вăрçă вĕренÿ ĕçне çÿлĕ пусăма лартма хушать. Кĕлĕмкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем çакна ăнланса илсе, вĕренÿре «отлично» паллăсемпе вĕренсе пыма тăрăшаççĕ. Л. Ргалева, П. Константинов, Егоров пионерсем вĕренÿре малта пыраççĕ.

Анчах начар вĕренекенсем те пурха. Акă, Мусьтакова вĕренÿ çулĕн 1-мĕш чĕрĕкне начар паллăсемпе вĕçленĕ. Чылай вĕренекенсем ним сăлтавсăрах шкула çÿремеççĕ. В. Кузнецов, А. Микишов вĕренекенсем часчасах урoксенчен юлаççĕ, вĕренме йĕркеллĕ çÿремеççĕ. Вĕренекенсен комитечĕ (председателĕ Вася Петров) вĕренÿ ĕçне лайăхлатас енĕпе нимĕнле ĕç те тумасть. Вĕренекенсен комитечĕн членĕсем паянхи куна çитсе те вĕренекенсем хушшинче вĕренÿ пахалăхне ÿстерес тĕлĕшпе пĕр калаçу та ирттермен.

Çулталăкри плана срокчен пурнăçласси шĕн

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хулари ĕççыннисем çак кунсенче пысăк ĕçкĕнÿпе ĕçлеççĕ. Фронт ыйтнине тивĕçтерес, Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра чаплă çĕнтерÿсем тăвакан фронтовиксене тивĕçлĕ пулас тесе, вагонсем юсакан заводри, депори, чугунçул станцинчи тата промартельсенчи рабочисем май пур таран тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Кавалерчик юлташ цехĕнчи токарьсем Александр Остапец, Андрей Гетьман, Николай Пшец, Анна Овчаренко юлташсем уйăхсерен ĕç нормине 300-шер процент тултараççĕ. Вĕсем юлашки кунсенче кашниех 3—4-шар çыншăн ĕçлеççĕ.

Паровозсен деповĕнчи комплекслă бригада (мастерĕ Черкасов юлташ) нумай пулмасть пĕр кун хушшинче 3 паровоза промывочнăй ремонт тунă, ĕç нормине 300 процент тултарнă. Машинистсем орденоносец Леонид Николаев тата Тимофеевпа Соловьев юлташсем талăкĕ-талăкĕпе паровоз çинчен анмасăр ĕçлеççĕ. Ноябрĕн малтанхи пилĕккунлăхĕнче вĕсем пĕр васкавлă задание пурнăçланă вăхăтра пĕр вĕçĕмсĕр 130 сехет хушши паровоз çинче пулнă.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, вагонсем юсакан заводри нумай цехсем ударниксен Пĕтĕм Союзри кунне—1943 çулти январĕн 1-мĕшне çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Кавалерчик юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ, заводра ударниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарма сĕнÿ панăскер, ĕç тухăçлăхне ÿстернипе тата производство процесне лайăхлатса пынипе çулталăкри плана 15 кун маларах—декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Цех коллективĕ ĕçре брак тăвассине хирĕç вирлĕн кĕрешме, юрăхсăр продукци кăларассине 0,5 процента çити чакарма;

цехри оборудование пушăлла ĕçлетерессине пĕтерме, электроэнерги расходлассине талăкра 20 киловатт-сехет чухлĕ пĕчĕклетме;

вырăнти ресурссемпе туллин усă курма, материалсемпе электроэнергие перекетлес режима çирĕп тытса пыма, продукцин хăйне ларакан хакне хальхинчен 8 процент чухлĕ чакарма;

ĕç тухăçлăхне, ноябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, декабрь уйăхĕнче 15 процент чухлĕ ÿстерме;

цехри кашни рабочин кулленхи ĕç тухăçлăхне 120 процента çитерме пулнă, хăйĕн примерне йышăнса илме заводри мĕнпур цехсене чĕнсе каланă.

Кавалерчик юлташăн цехĕнчи рабочисем чĕнсе каланине халĕ вагонсем юсакан заводри цехсемпе бригадăсенче тата сменăсенче сÿтсе-яваççĕ.

Вутă хатĕрлемелли плана тултарнă

Чугунçул транспорчĕ валли кăçалхи çулăн иккĕмĕш çурринче вутă хатĕрлесе памалли плана пуринчен малтан Йĕпреç леспромхозĕ (директорĕ Федоров юлташ) тултарнăччĕ. Çак кунсенче çав плана унпа ăмăртса ĕçлекен Вăрнар леспромхозĕ те (директорĕ Сазонов юлташ) тултарчĕ. Вăрнарсем çурçулти планран ирттерсе 6.740 кубометр вутă хатĕрленĕ, 171 кубометр турттарнă. Вăрманта ĕçлекенсем халĕ вутта татах та хатĕрлеççĕ, турттараççĕ.

Вăрнар леспромхозĕнче 3 район — Вăрнар, Шăхасан тата Калинински районсем ĕçлеççĕ. Ултă уйăх хушшинче вутă хатĕрлемелли задание вĕсем пурте ăнăçлăн тултарнă. Калинински районран пынисем уйрăмах организованно ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, вăрманта ĕçлекенсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Вăрнар районĕнчи «Волонтер» колхоз членĕ, 60 çулхи И. Семенов юлташ заданирен ирттерсе 200 кубометр вутă турттарнă. Çавăн пекех вăрман касакан О. Курбатова, турттаракансем В. Филиппов, Е. Расадин тата Кисляков юлташсем те хăйсен заданийĕсене 2-шер хут ирттерсе тултарнă.

Танксен колоннисене тума

Шăхасан районĕнчи ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 256.088 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 47 пин тенкĕ пухнă. Танксен колоннине тумашкăн Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи «Прожектор» колхоз членĕсем 6 пин тенкĕ, «Красное Сормово» колхоз членĕсем 7 пин тенкĕ панă.

Çавăн пекех, çак ĕç валли укçа-тенкĕ пухас ĕç «Пинер», «Чуваш. ЦИК», «Большевик» колхозсенче те ăнăçлăн пулса пырать.

В. ЯКОВЛЕВ.

* * *

КАЛИНИНО. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 8.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине тума 3.000 тенкĕ укçа пухнă.

И. ФЕДИНГИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ, декабрĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем фронтовиксем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пыраççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комиссин складне 60 мăшăр çăматă, 80 кĕрĕк пиншак, тиртен çĕленĕ жилетсем 5, тир алсасем 81 мăшăр, 158 килограмм çăм, 34 фуфайка, 18 ваткăллă брюки, 68 мулаххай, 64 мăшăр носки, 28 мăшăр çăм алшиш, ăшă кĕпе-йĕмсем 47 мăшăр, аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм 130 мăшăр тата ытти япаласем пухăннă.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, юлашки вăхăтра ĕççыннисем ку ĕçе активлăнрах хутшăнма пуçларĕç.

Т. МЫШКИН,
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Уэллес радио тăрăх тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). США вăрçа хутшăннăранпа çулталăк тултарнă май, радио тăрăх сăмах тухса каласа, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес çапла пĕлтернĕ: США правительстви туса хатĕрленĕ стратеги паянхи кун тĕлне уçăмлăн тухса тăрать, тенĕ. Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен тата тинĕс-çар вăйĕсен, çавăн пекех пирĕн енне тăрса кĕрешекен халăхсен çитĕнĕвĕсем,—тенĕ Уэллес,—пире çĕнĕ шанчăк кÿчĕç, пирĕн шанчăка татах та ытларах çирĕплетрĕç.

«Эпĕ,—тенĕ малалла Уэллес,—Америка хальхи вăрçа хутшăннăранпа çулталăк тултарни пире хамăртан çапла ыйтма май парать пулĕ тесе шухăшлатăп: иртнĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче США правительстви тытса пынă политика Америка халăхĕн интересĕсемпе пур тĕлĕшрен те килĕшсе пынă-ши? Çав тапхăр хушшинче эпир тĕнчери йĕркелĕхе сыхласа хăварассишĕн хамăр çине пĕчĕк ответлăх та пулин илесрен те пăрăнса пынă. Çав тапхăрăн чылай вăрăма тăсăлакан пайĕнче эпир ытти державĕсемпе пĕрле ĕçлессине кансĕрлекен чăрмавсене сирсе яма тăрăшмасăр тăнă, кайран гитлеризм патне илсе çитернĕ вăйсем пухăнса пынă вăхăтра эпир, пирĕн халăхпа правительство, тĕнчери ĕçсенчен аякра тăнă.

Çирĕм çул каярах пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварма май паракан пĕтĕм тĕнчери йĕркене тунă çĕрте, хальхи тотальнăй вăрçă патне илсе çитернĕ условисем пулса тăрассине сирсе яма пултаракан пĕтĕм тĕнчери йĕркене тунă çĕрте ытти пĕрлешнĕ халăхсем çумне хутшăннă пулсан, эпир тĕрĕсрех туман пулăттăмăр-ши?

Хальхи вăхăтра эпир пирĕнпеле пĕрлешнĕ правительствăсемпе таччăн тăрса тăшмана хирĕç вăрçатпăр. Эпир юлашки вăхăтра тĕрлĕ фронтсенче ăнăçлă операцисем туса ирттерни пиртен пĕр-пĕринпе лайăхрах пĕрлешсе ĕçлеме тата пирĕн союзниксенчен пĕр-пĕрне лайăхрах ăнланса ĕçлеме ыйтнă. Вăрçă вăрçасси хăй те вăл пĕрлешнĕ нацисен мĕнпур правительствисенчен пирĕн вăрçăри тата тинĕс-çар тĕлĕшĕнчи мероприятисем енĕпе малалла та килĕштерсе ĕçлеме ыйтать. Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн хамăрăн хăрушсăрлăх çирĕп пуласси килет. Паллах ĕнтĕ, пирĕн хамăра валли çакăн пек çирĕп шанчăк туса хумалла: халĕ хамăр ĕмĕтленсе кĕрешекен çĕнтерĕве тунă хыççăн, пирĕн ирĕклĕ халăхăн, хамăр енче кĕрешекен ытти ирĕклĕ халăхсемпе пĕрле пулса, хальхи катастрофа çĕнĕрен пулмалла мар тăвассишĕн пĕтĕм тĕнчипе пĕрлешсе ĕçлемелли тивĕçлĕ мероприятисене пурнăçа кĕртмелле».

США-ра хĕçпăшалсем туса кăларас ĕç ÿсни

Нельсон выступленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Промышленниксен национальнăй ассоциацийĕн съездĕнче сăмахпа тухса, çар производстви ĕçĕсен управлени председателĕ Нельсон çапла каланă: США-ри вăрçă хатĕрĕсем туса кăларас ĕçĕ калăпăшĕ хальхи вăхăтра тĕнĕл держависен мĕнпур производствипе танлаштать, тенĕ. Пĕрлешнĕ çĕршывсем халĕ хĕçпăшалсене вĕсен противникĕсем туса кăларнинчен икĕ хут нумайрах туса кăлараççĕ. Хĕçпăшалсем туса кăларасси Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче ÿссех пырать.

Тепĕр çултан Америка производстви, Нельсон сăмахĕсем тăрăх, тĕнĕл держависен производствинчен икĕ хута яхăн иртсе каять, пĕрлешнĕ çĕршывсен пĕтĕмĕшлĕ продукцийĕ вара тĕнĕл держависен продукцийĕнчен виçĕ хута яхăн иртсе каякан пулать.

Тĕнĕл держависем вăрçă пуçланиччен хĕçпăшалсен çавтери пысăк запасĕсене пухса хунă. Пĕрлешнĕ çĕршывсем çав енĕпе кая юлнине 1942 çул вĕçленнĕ тĕле пĕтерме пултараççĕ пулмалла, килес çул пуçланнă тĕле пĕрлешнĕ çĕршывсен хĕçпăшал запасĕсем, сахалтан та, тĕнĕл держависен запасĕсемпе танлашаççĕ. Пĕрлешнĕ çĕршывсем самолетсем, çар карапĕсем, танксемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тĕлĕшпе тĕнĕл держависенчен чылай вăйлăрах пулаççĕ.

1943 çулта Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем грузсем турттаракан суднăсем пĕтĕмĕшпе 16 миллион тонна водоизмещениллĕх тăваççĕ, тен 18—20 миллион тонна водоизмещениллĕх те тума пултарĕç.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америкăн «вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем ĕнер Лилльри моторсем тата вагонсем тăвакан заводсене атакăланă. Тапăну ăнăçлă результатсем панине палăртнă.

Декабрĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле кăнтăр-хĕвеланăç Германи çине вăйлăн пырса тапăннă. Çанталăк начар пулнă пирки операцисен результачĕсене тĕплĕнех палăртайман. Хăйсен базине 9 бомбардировщик таврăнман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх; Эйндгофен (Голландия) çине декабрĕн 6-мĕшĕнче кăнтăрла тапăннă чухне пĕтĕмпе 100 яхăн çăмăл бомбардировщик пулнă. Вĕсене 400 истребитель хÿтĕлесе пынă. Вĕсем противникăн вăйĕсене аяккалла сирсе ярас шутпа Франципе Голландири чылай объектсене атакăланă. Радиолампăсемпе радиоаппаратура тăвакан питех те пысăк завода тапăннă хыççăн унта талккишĕпех вут-кăвар ялкăшса выртнă. Çав заводра 15 пин рабочи ытла ĕçлет. Эйндгофена атакăланă çĕре союзлă çĕршывсен авиацийĕ те хутшăннă.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Çурçĕр Африкăра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман. Декабрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер Бизертăпа Тунисри аэродромсене пыра-пыра тапăннă. Эль-Агейла районĕнче патрульсем малалла активлăн кĕрешсе пынă.

—◎—

ИТАЛИН ШАЛТИ ПОЛИТИКАЛЛА ЛАРУ-ТĂРĂВĔ ПИТЕХ ТЕ ÇИВĔЧЛЕНСЕ КАЙНĂ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 6-мĕше. (ТАСС). Америкăри пичет Муссолинин сăмахне Италин шалти политикăллă лару-тăрăвĕ питех те çивĕчленсе кайнине кăтартса паракан сăмах тесе хаклать. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн шухăшĕпе, Муссолини сăмахĕ унăн режимĕ пĕтĕмĕшпех панкрута тухнине кăтартса парать. «Нью-Йорк таймс» хаçат çакна çирĕплетсе çырать: Муссолинин халичченхи сăмахĕсенче мухтаннипе капăрлăх пайни паларса тăнă пулсан, унăн юлашки сăмахĕ Италия халĕ кĕрсе ÿкнĕ инкеклĕ лару-тăрăва «çăмăллăх кÿрекен обстоятельствăсемпе» тÿрре кăларма хăтланни пулса тăрать.

«Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Новер каланă тăрăх, Муссолини сăмахĕ пĕтĕмĕшпех Италия хальхи вăхăтра арканса каясси патне çитнине кăтартса парать. Италие çухатни гитлерла Германие çапса аркатасси патнелле ярса пуснă пысăк утăм пулса тăнине ăнланса, Гитлер Италие кирек мĕнле пулсан та хăй çумĕнчех тытса хăварасшăн.

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçатăн ютçĕршыври ĕçсене пăхса тăраканĕ кăтартса панă тăрăх, нимĕçсем Италири вăрçа хирĕç шухăш-кăмăлсене пусарса лартма тăрăшаççĕ. Нимĕçсемпе Итали халăхĕ хушшинчи çыхăнусем çивĕчленсех пыраççĕ, Итали халăхĕ нимĕçсем çине тăшманла пăхнинчен уççăнах тытăçусем пуçланса каяс хăрушлăх тухса тăрать.

СТАМБУЛ, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Турци журналисчĕ Ялчин, «Хабер» хаçатра Муссолини сăмахĕ пирки çырса, тăрăхласа çапла палăртать: «Фашистсен чăнлăхĕ тăрăх нихăçан та йăнăш туман Гитлерпа Муссолини Россиăн вăрçăри пултарулăхĕпе хăватне хаклас ĕçре тепле майпа тата йăнăшнă. Гитлер çакна ăна иртнĕ хĕлĕн вĕçĕнчех йышăннăччĕ. Италия вара çак чăнлăха çак хĕлĕн пуçламĕшĕнче йышăнни Муссолини хăйĕн союзникĕнчен пĕре те кая юлманнине кăтартса парать.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Совет Союзĕн Великобританири посольствин советникне А. А. Соболев юлташа Чрезвычайнăй тата Полномочнăйн посланик рангне панă.

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 9-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре парткабинетăн лекцисем ирттермелли залĕнче (Чувашская, 6). Сталин юлташăн доклачĕсемпе приказĕсене вĕренекенсене пулăшас майпа:

«Пĕтĕм халăхăн партизанла движенийĕ—тăшмана çапса аркатмалли татăклă условисенчен пĕри»

ятлă темăпа лекци пулать.

Лекторĕ — **П. Г. Григорьев.**

Билетсене парткабинетра тата ВКП(б) Хула Комитетĕнче (124-мĕш №-лĕ пÿлĕм) илмелле.

ВКП(б) Хула Горкомĕн Парткабинечĕ.

Пирĕн земляксем

Пăлан хыççăн

Лейтенант Павел Щипцов Хĕрлĕ Çара киличчен «Çамрăк большевик» хаçатра ĕçленĕ. Халĕ вăл фронтра. Темиçе хутчен те çапăçура пулнă.

Павел Щипцов рота командирĕн помощникĕ пулса ĕçлет, фашистсемпе çапăçать. Тăшмана пĕтĕм чунĕнчен кураймасть. Çакăн пек командирсемпе чухне нимĕнле хаяр тăшман та хăрушă мар.

Пĕринче, çуллахи вăхăтра Щипцов юлташ пилĕк боецпа пĕрле разведкăна кайрĕ. Ăна «чĕлхе» тупса килме задани панă. Задача çăмăл мар. Анчах мĕнле йывăр пулсан та, ăна пурнăçа кĕртесех пулать.

— Ну, юлташсем, пирĕн ума лартнă задачăна пурте лайăх ăнланатăр-и? — ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле разведкăна пыракан боецсем çине пăхса.

— Ăнланатпăр, лейтенант юлташ, — пурте харăс ответлерĕç боецсем.

Вĕсем автоматсемпе хĕçпăшалланнă. Пилĕкĕсем çумĕнче тăватшар граната. Боецсем, пĕринчен тепри хастарлăрах. Вĕсем разведкăра пуçласа мар, темиçе хутчен те пулнă.

Вăрмана кĕрсен вĕсем виçшерĕн икĕ ушкăна уйăрăлчĕç.

— Астăвăр, юлташсем, мĕнле пулсан та пăшал сасси ан кăларăр, — тесе çирĕплетрĕ лейтенант Щипцов боецсене.

— Есть, лейтенант юлташ!

Вăрман урлă каçсан, вĕсен уя тухмалла. Çакăнта ĕнтĕ фашистсем çирĕпленсе ларнă. Вĕсем кунта иккĕмĕш хĕле кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кăнтăрла шăплах. Çĕрле пулсан ĕç пуçланать. Пурта, пăчкă, тимĕр шанкăртатнă сасăсем илтĕнеççĕ. Вĕсем унта хăйсене валли йăвасем — блиндажсем, дзотсем тăваççĕ.

Разведчиксем сыхланса, унталла-кунталла пăхкаласа утаççĕ. Ку вырăнта вăрман çавтери çăра, йывăçĕсем çÿлĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хĕвел те курăнмасть. Вăрман айĕ вара таса: курăк та сайра, турат-тĕретсем те çукпа пĕрех.

Каçалла сулăнчĕ. Хĕвел анасси те инçе мар. Вăрман хĕрне тухасси инçе юлмарĕ.

— Чарăнар, юлташсем. Хĕвел анса тĕттĕм пуличчен тăхтар çакăнта. Фашист салтакĕсем йывăç касма килеççĕ ĕнтĕ ку вырăна. Ав, куратăр-и, малта касса йăвантарнă йывăçсем курăнаççĕ, — терĕ лейтенант Щипцов.

Боецсем пурте пĕрле пуçтарăнчĕç. Никам курмалла мар вырăн тупса, пытанса ларчĕç. Лейтенант Щипцов пĕр боеца хăйпе пĕрле илчĕ те, пĕр аллă метр маларах тухса ларчĕ:

— Манран приказ пулмасăр никамăн та вырăнтан хускалма юрамасть, сасă ан кăларăр. Табак туртас пулсан, шинельпе пĕркенсе çеç туртăр. Фашист салтакĕсем нумайăн курăнсан, ан тапăнăр, пĕччен е иккĕн пулсан, чĕрĕлле тытса илме тăрăшăр. Ăнлантăр-и? — терĕ Щипцов.

— Ăнлантăмăр!

Хĕвел çĕрпе пĕлĕт хушшине хĕсĕнсе анать. Çил лăпланчĕ. Вăрман шăп. Йывăç çулçисем те хускалмаççĕ. Анчах вăрманта тĕрлĕ кайăк юрланипе сад пахчинче ларнă пек туйăнать. Эх, илемлĕ те вăрманĕ, вăрманĕнчен ытла кайăк-кăшĕк сассисем савăнтараççĕ! Фашистсем, çавтери илемлĕ вăрмана касса, савăнăçлă кайăк-кĕшĕксене пистерессшĕн.

Сасартăк инçе те мар курăк чăштăртатни илтĕнчĕ. Лейтенант Щипцов касса урлă çĕкленсе пăхрĕ. Курать, хăйĕнчен инçех те мар, ĕне евĕрлĕ выльăх тăрать: «Мĕнле выльăх ку?» Халиччен вăл кун пек ĕне курман, мĕншĕн тесен кунăн мăйракисем çуршар метр тăршшĕ чаркаланса тăраççĕ, кашни мăйраки виç-тăватă йÿплĕ.

— Ибрагимов, пăх-ха, мĕнле выльăх ку? Паллатăн-и эсĕ? — тесе хуллен пăшăлтатса ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле ларакан боецран.

Боец Ибрагимов Пушкăрт республикинче, Урал тăвĕсем хушшинче ÿснĕ çын. Сунарçă. Тĕнчери нумай тĕрлĕ кайăксене паллать. Çавăнпа та вăл мăйракаллă выльăха курсанах чĕтрес ÿкрĕ.

— Пăлан ку, лейтенант юлташ, пăлан. Персе вĕлерес ăна, — терĕ вăл автоматне тытса пеме тĕллесе.

Пăлан хăйĕн умĕнче çын пуррине сисрĕ пулас, тепĕр еннелле çаврăнса тăчĕ, мăйракисене лăпчăтса ĕнси çине хучĕ, тарма хатĕрленчĕ.

— Чарăн, ан пер! Пăлан тесе пĕтĕм ĕçе пăсас теттĕм эсĕ! — чарчĕ ăна Щипцов.

Ибрагимов кăмăлсăр пек пулса, автоматне аялалла кăнтарчĕ. Пăшал сасси кăларма юраманнине хăй те астуса илчĕ пулас.

— Эх, вăхăтсăр килсе çитрĕ ку выльăх. Сахалтан та пилĕк пăт аш пулатчĕ. Çулталăк ытла вĕт ĕнтĕ пăлан какайне çисе курман, — тесе шелленĕ Ибрагимов.

Пăлан ик-виçĕ хутчен малалла сикрĕ те, татах чарăнса тăчĕ. Вăл пĕр малалла, пĕр хыçалалла йăлт-ялт çаврăнкаласа пăхать. Унăн малта та, хыçалта та, йĕри-таврах çынсем пур пек туйăнать. Çавăнпа вăл ниçталла тарма аптăраса тăрать.

Сунарçă Ибрагимов пĕтĕм ÿт-пĕвĕпе сиксе чĕтрет. Унăн халех пăлана персе ÿкерес килет. Ним тăвайман енне аллинчи автоматне тĕрлĕ май çавăркаласа пăхать.

— Лейтенант юлташ, пеме ирĕк пар. Эпĕ ăна пĕр пульăпа ÿкеретĕп. Тупата ÿкеретĕп, — тесе йăлăнать вăл.

— Чарăн! Каланă сана пĕрре, юрамасть тесе. Тата мĕн кирлĕ? — чарать ăна Щипцов.

Сасартăк пăшал сасси ухлатса кĕрлерĕ. Пăлан ик-виçĕ хутчен пĕр вырăнта çÿлелле сиксе илчĕ те, çавăнтах çĕре чăсăлса выртрĕ.

— Ы-ых, мĕншĕн петĕн? Пĕтĕм ĕçе пăсрăн вĕт эсĕ. Кушăн сана... хыттăн вăрçса тăкрĕ Щипцов Ибрагимова.

Леш нимĕн ăнланмасăр тăрать:

— Çук, лейтенант юлташ, эпĕ пемерĕм. Енемсен, акă, пăх автомат кĕпĕне. Тап-тасах. Ăна леш юлташсем печĕç пулĕ...

— Ну, вĕсене! — ним тума пĕлмесĕр илленет Щипцов.

Хăйсенчен аллă хăлаçра пăлан виллеймесĕр урисемпе тапкаланса выртать, пуçне çĕкле-çĕкле çĕре çапать.

Пăлана персе ÿкернипе савăннă Ибрагимов: «Мана пеме ирĕк памасан та, юлташсем персе ÿкерчĕç-ха. Пăлан ашне çиетпĕр ĕнтĕ», тесе шухăшлать.

Унччен те пулмасть, пăлан патне икĕ фашист салтакĕ чупса пыраççĕ.

— А-а... ав, камсем пенĕ пăлана, — тин чухласа илет Щипцов. Халĕ ĕнтĕ вăл фашист салтакĕсене мĕнле майпа тытса илесси çинчен шухăшлать.

— Ибрагимов, хăвăрт юлташсем патне упален. Пурте кунта килччĕр, — хушать Щипцов.

Ибрагимов, пĕр сăмахсăр, йывăççен хушшипе хырăмĕпе шăвать.

Фашистсем пăшалсене йывăç çумне тăратса хураççĕ те, пăлан тирне сÿме хатĕрленеççĕ.

Лейтенант Щипцов фашистсем пăлан тирне сÿни çине пăхса тăрать. Халĕ ĕнтĕ вăл вĕсене пĕччен-çи те тытса илĕ, анчах тата кăшт тĕттĕм пуласса кĕтет, мĕншĕн тесен вĕсене тытнă вăхăтра мĕнле пулсан та шăв-шав пулма пултарать. Вăхăт шăвать. Боецсем час килеймеççĕ. Фашист салтакĕсем ним васкамасăр пăлан тирне сĕвеççĕ. Нимĕнрен шикленмесĕр тенĕ пек иккĕшĕ пакăлтатса калаçаççĕ: «Вырăс планне пытрăмăр. Ашне хамăр çийĕпĕр, тирне ăрăмсем патне куçтарас ярăпăр», теççĕ пулас. Вăхăт-вăхăт кулса та илеççĕ. ...авăнăç вĕсемпе...

Акă боецсем пурте çитрĕç.

— Эсир тăваттăн хыçалтан çаврăнса пырăр, эпир Ибрагимовпа мала тухатпăр, — терĕ лейтенант Щипцов.

Фашистсем пăлан тирне сÿсе пĕтерчĕç. Канма ларчĕç. Папирос чĕртсе туртаççĕ. Çийĕнчи гимнастеркисене юнпа вараланасран хывса пăрахнă. Кĕпи çаннисене чавса таран тавăрнă. Алли тунисем чĕп-чĕр юн. Инçетрен пăхсан, чăн-чăн палачсем пек туйăнаççĕ.

— Стой! Вырăнăртан ан хускалăр! — ытла хытах та мар кăшкăрчĕ лейтенант Щипцов.

Фашистсем мĕнле ларнă, çаплах хытса кайрĕç. Умĕсенче икĕ çын, хыçалта тăватă çын тăнине курчĕç. Сăварĕсенчи папиросĕсем çĕре тухса ÿкрĕç.

— Кам ирĕк панă сире вырăс çĕршывĕнчи пăлана вĕлерме? Эпир вĕсене хамăр тытмастпăр. Курсан та ирттерсе яратпăр, — терĕ Щипцов фашист салтакĕсем умне пырса тăрса.

Хăраса ÿкнĕ фашист салтакĕсем ăнланмалла мар пăк-пак туса калаçса илчĕç.

— Ну, илĕр хăвăрăн гимнастеркусене. Айтăр пирĕнпе пĕрле. Унта нимĕçле пĕлекенсем пур. Каласа парăр, — тесе команда пачĕ Щипцов.

— Пăлан ашне те хамăрпа илетпĕр-и? — ыйтрĕ Ибрагимов.

— Илес. Мĕншĕн хăварас ăна? Фашистсем тытрĕç. Эпир ашне çийĕпĕр,— хушрĕ Щипцов.

Тăватă боец пилĕк пăтлă пăлан ашне, тирне йăтрĕç, лейтнант Щипцовпа Ибрагимов фашист салтакĕсене хуса утрĕç.

— Ак, епле телей пулчĕ, ку фашистсем пирĕн алла пăлан хыççăн килсе лекрĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн алăра «чĕлхе» те пур. Апат пĕçерме аш та çителĕклĕ, — тесе утать Ибрагимов.

— Фашистсене çĕнтерме çынсем çеç мар, вăрманти кайăксем те пулăшаççĕ. Ăнлантăн-и? — тесе пырать лейтенант Щипцов.

— Чăн, — çирĕплетет Ибрагимов.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Дом Красной Армии
9 декабря
в постановке актеров ЧГАТ
А. ОСТРОВСКИЙ
«ВОСПИТАННИЦА»
Комедия в 4-х актах.
Билеты ежедневно с 4-х часов вечера.

Чуваш. Контора Главкинопрокат
Выпускает на экраны республики новый звуковой американский фильм
Музыкальную комедию
„ТРИ МУШКЕТЕРА"
По роману Александра Дюма.
Режиссер — Аллан Двэн.
Музыка — Самуила Покрасс.
Стихи — Вальтера Буллон.
ДЕЙСТВУЮЩИЕ ЛИЦА:
Д-Артаньян — Дон Амиге,
Три лакея — Братья Риц,
Атос — Дуглас Думбрил,
Арамис — Джон Кинг,
Портос — Руссел Гикс.
Производство „ВОКС 20-го столетия".

Артели «Металлист» требуются рабочие мужчины, женщины следующих специальностей: литейщики, кузнецы, молотобойцы, жестянщики, слесаря, токаря и часовые мастера.
Обеспечиваются общежитием и столовой, оплата сдельная. Адрес: Кировский поселок, Гражданская ул., дом 3, телефон 5—45 (два звонка).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ:** редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11625 Типография № 1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 п.